**ШУР ЮР КАЙСАН...**

Пӗр иртнӗ вăхăт
çаврăнаймӗ урăх.
Шур юр кайсан,
çанталăк ăшăтсан,
Ытла таса та
симӗс-симӗс курăк
Кив çулçă айӗнчен
тухать шăтса.

Чи илемли, чи çамрăкки
çур кунӗ
Ылмашăнан кунсен
ӗретӗнче.
Сыв пултăр çак
аталану саккунӗ,
Хăй тӗллӗн
улшăнса пыран тӗнче!

Кам алă пачӗ,
кам, ав, алă сулчӗ, —
Çапла çанталăк
вӗçсӗр тупăшать.
Пӗрре те тунсăх çукчӗ —
кивӗ çулçă
Хускатрӗ те
шуйхатрӗ шухăша.
Ан тарăх, ан шелле,
ан çун, ан тăвăн —
Черет арпашăнман-ха
пуçӗпех.
Йӗрки çапла-çке пурнăçăн,
мӗн тăвăн? —
Çул çитнӗ ватă кайӗ
çулçă пек.

Пӗр иртнӗ вăхăт
çаврăнаймӗ урăх —
Аттеçӗм çуккă ӗнтӗ
тахçанах.
Иртет иккен те ырлăх,
иртмӗ хурлăх —
Тухса йӗретӗп вăрттăн
пахчана.

Вӗсем туса ӗлкӗреймен уявăн
Пыл сăрине
ӗçетпӗр ку таран.
Явса пӗтереймен
сӳсмен пăявӗ
Вӗçне тухман кунсем пек
пăтара...

*Исмуков, Н. А. Шурă юр кайсан… : [сăвă] // Исмуков, Н. А. Çăлри çăлтăрсем = Звезды в кладезе : [сăвăсем] / Н. Исмуков. – 2-мӗш хушса кăларнă кăларăм. – Шупашкар, 2011. – С. 146, 148.*